к 84.89(=Чув)
К 27
Ч-49331

Марина Карягина



# Паттăр вăйĕ — пăтăра

Национальная библиотека ЧР
4-049331

К84.89(=4Чув)
К27

Марина Карягина

# Паттăр вăйĕ — пăтăра

Сăвăсемпе хăвăрткаламăшсем



Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2017

84(2Рос=Чув)6-52 * 444.3 * 93

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2=635.1)6
К 27

К 84.89(=Чув)6-52 * 444.3

Кӗнеке ал ҫырӑвӗ ачасемпе ҫамрӑксем валли
чӑвашла ҫырнӑ произведенисен 2016 ҫулхи конкурсӗнче ҫӗнтернӗ.
Конкурса Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗ
2011 ҫулхи июнӗн 16-мӗшӗнче йышӑннӑ постановленипе
килӗшӳллӗн йӗркеленӗ.

**Карягина М.Ф.**
К 27 Паттӑр вӑйӗ — пӑтӑра: сӑвӑсем, хӑвӑрткаламӑшсем / М.Ф. Карягина — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2017. — 31 с.
ISBN 978-5-7670-2585-5

Сӑнавҫӑ ача кашни утӑмра тӗлӗнтермӗш асӑрхать. Тантӑшӗсен хутшӑнӑвӗнче те, ҫутҫанталӑкри улшӑнусенче те хӑйне евӗрлӗхсем курса ырӑпа усала, илемпе килпетсӗрлӗхе уйӑрма вӗренет; аслисене итлеме, Тӑван ҫӗршыва хаклама, ҫынлӑха, тӑванлӑха хисеплеме хӑнӑхать. Автор кӗнекере поэзин тӗрлӗ жанрӗпе усӑ курнӑ. Чӑваш литературинче сайра тӗл пулакан хӑвӑрткаламӑшсем ача чӗлхинчи кӑлтӑксене пӗтерме пулӑшаҫҫӗ, чӗлхине пуянлатаҫҫӗ.

«Паттӑр вӑйӗ — пӑтӑра» кӗнекене шкул ҫулне ҫитмен тата кӗҫӗн классенче вӗренекен ачасем валли ӳсӗм уйрӑмлӑхӗсене шута хурса хатӗрленӗ.

Ч-49331

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2=635.1)6

Национальная библиотека
Чувашской Республики

ISBN 978-5-7670-2585-5

© Карягина М.Ф., 2017
© Чӑваш кӗнеке издательстви, 2017



## Хитре витре.

Тахăш туртрĕ çивĕтрен:
— Камăн витри чи хитри?
Тусăм чĕлхи çивĕчрен
Хуравларĕ:
— Тикĕтли!

Тиркесе кулма пулать:
Кам мĕнлине хапăллать!
Пулă тытма кайнă чух
Атма пек тĕпли те чух!

Сарăтутлă Нил калать:
— Сан та путлĕ пулкалать:
Кĕвентеллĕ ик витре
Кĕвĕпе пыни хитре!

— Чи хитре витре — хĕрли!
— Хĕрли мар ҫав, пусхĕрли:
Пантăртаттар патакпа —
Пулса тăрĕ параппан!

— Тĕрлĕ-тĕрлĕ тĕрĕлли!
— Тĕпĕ тĕкĕр евĕрли!
— Тин туяннă витрене
Ним те ҫитмĕ ҫур эрне!..

Е пĕрерĕн, е пĕрле
Чылайччен кĕрле-кĕрле
Хĕвел аннă тĕлелле
Чăнлăх тупрĕ ҫак «вĕлле»:

Чи тирпейли — кам ачи?
Унăн витри — чи-чи-чи!
Камăн витри чипер мар,
Чие ҫырли сĕнер мар.





# Кукша кӗр.

Кукшаланчӗҫ йывӑҫсем,
Ушкӑнланчӗҫ кайӑксем,
Тамаша тӑк тамаша:
Мӗскер пулнӑ ку йыша?
Мӗскер пулнӑ тӗнчене?
Сар ҫу сӗртӗм чӗл ҫине,
Мӑйӑр чикрӗм кӗсьене,
Тухса чупрӑм пӗчченех
Ҫывӑхри пӗр рашчана
Сӑйламашкӑн пакшана.
Пашкаса ларать пакша —
Калӑн, трон ҫинчи патша.
Ешӗлех-ха хыр рашчи —
Урӑх тӗслӗ пек патши...

Килчӗ кӗр куҫҫуль тӑкса,
Тен, вӑл ӗмӗрлӗх кукша?..





# Паттăр вăйĕ — пăтăра.

Аппа калать:
— Виçĕ тирĕк çисе ятăм, — тет.
Пĕтрĕ пуç!
Тете калать:
— Капла яла култаратăн, — тет. —
Выçă куç!
Тирĕк ăçтан усса пытăр?!
Маншăн тесен пăтă пултăр.
— Аппа! — терĕм, —
Тирĕк çисе аппаланар мар!
Апат валли савăт хăварар. —
Кăлтăр-кăлтăр кулса ячĕç — пултăрах,
Тирĕкре-им паттăр вăйĕ — пăтăра...







# Пĕлнĕ пулсан...

Ача пулма
Çăмăл мар пуласса пĕлнĕ пулсан...
Çуралаттăм асатте пулса —
Çăра кăна сухалпа!
Çырлахаттăм сахалпа:
Пахча тулли çырлапа!..
Халь
Çӳç вырăнне мулаххай,
Сылтăм аттăм сулахай —
Тăратăп ни ача, ни пăча, ни мучи...
Эх-ха-хай!

Ача пулма
Ҫăмăл мар пуласса пĕлнĕ пулсан...
Ҫуралаттăм качака пулса —
Ҫаврака мăйракапа!
Майранни пек пушмакпа!
Шăл хушшинчи кăчкăпа!..
Халь
Кăчăк туртсан — килмелле,
Пурне те итлемелле —
Хамăн ирĕк пач та ҫук элле...
Тĕлĕнмелле!

Ача пулма
Ҫăмăл мар пуласса пĕлнĕ пулсан...
Ҫуралаттăм хур аҫи пулса!
Тукалаттăм хăранҫи —
Чараймĕччĕ кукаҫи!
Халь
Хуллен калаҫ пĕрехмай,
Вĕҫес килет — утса кай!
Тăратăп: ни хур, ни хурах —
Ҫурмаккай...
Кай-кай-кай!

— Ача пулма
Ансат мар пуласса пĕлнĕ пулсан... —
Терĕм эпĕ хамăн виҫ туса, —
Ахаль мар ача пулса
Ҫуралаттăм йăл кулса —

Йӑлӑхтарчӗ ватӑлса!
— Халь?..
— Ватӑлтарать макӑрни,
Ҫавӑнпа вӗт-шакӑрне:
«Ан йӗр, ан йӗр ӗмӗрне!» —
Тет кашни атте-анне.



# Вăхăт çук.

— Арçук, килте пĕр хăт та çук, —
Тет мана тин таврăннă анне. —
Анне пĕлмест çав сăлтавне:
Хăт туса ларма ман вăхăт çук!
Автансем халь вăтанмасăр
Авăтаççĕ пĕр канмасăр:
Арпаштарчĕç вăхăта.
Айăпĕ шăп çакăнта!





# Ывăнакан атă.

Выляма кăна пуçлатăн —
Ывăнать те чупкăн атă.
Мĕн тăвас ман мăранпа,
Аран-аран пыранпа?
Киле леçес — аякра,
Хывса персен лайăххрах:
Типĕ чăлха тĕпĕпе
Йĕпе куна типĕтем!



# Чĕрене пыман тетте.

Кунсерен мана тете
Парнелет пĕрер тетте.
«Кирлĕ мар, тете!» — теп те,
Вирхĕнет ҫĕре тетте.

Тав тетте тăвакана,
Анчах ют ҫав вăл мана,
Кўрсе килнĕ аякран,
Те кунта ăста ҫукран?

Хĕрхенетĕп айвана:
Эп çĕмĕрмен — хăй ванать.
Çийĕнчех сĕретĕп маç —
Темшĕн чĕрĕлсе тăмасть.

Урлăш-тăршшĕ — пĕр хăлаç!
Пурпĕр чĕрене пымасть.
Мĕскер кăна çитермен...
Пылчăк тăрăх сĕтĕрмен...

Покемон та спайдермен —
Ятран чĕнме хатĕрлен
Чĕлхӳне хуçа-хуçа,
Калăн, килте вăл хуçа!

Çĕр-пин хут паха Мăркка,
Хăмăр çăмлă чăмăркка:
Хамăрла мăрла-мăрла
Юрă хывать хамăрла.



Национальная библиотека
Чувашской Республики
Ч-49331





# Чӑрӑс пукане.

Мӗншӗн чурӑс пукане
Парнелерӗн-ха, анне?
Юрлама ӑстишӗнех
Мӗн тума мана ҫӗнни?

Ман пек юрлас вырӑнне
Тӑсать ют ҫын юррине...
Чӑвашла ташла-ташла
Такмаклатӑр чӑвашла!

Ни «анне» теме пӗлмест,
Ни килме хушсан килмест.
«Ма!.. Ма!..» — тесе кӑшкӑрать —
Парса ярас кашкӑра.


А
Я

# Алфавит.

— Çав — А, —
Тет Çава.
— Я — кур, —
Тет Якур.
— Як ку, —
Тет Якку.
— Ку — чан, —
Тет Кучан.
— Ку — рак, —
Тет Курак.
— Ку — шак, —
Терĕ те Кушак,
Ăнланмасăр шак
Хытса тăчĕ пĕр Ашак:
— Шак пулать-и çак?
Шаклатать тăк, ку — пушмак!
Итлĕр-ха, епле такмак:
Шак-шак-шак!
Шак-шак-шак! —
Ташша чĕнчĕ çак Ашак:
Те шакмак,
Те такмак,
Те ун уринчи пушмак —
Алфавичĕ-мĕнĕпех
Ĕнтĕ çĕнĕ кĕвĕ пек.



## Мăнтăр хăнтăрпа ватă ăтăр.

*Хăвăрткаламăш.*

Пĕр мăнтăр хăнтăрпа
Ватă ăтăр
Тăр кăнтăрла
Вупăр пырне ларнă.
Вăтăрăн тăтăмăр та —
Вăтăртăмăр та хăтăртăмăр,
Хăтăртăмăр та вăтăртăмăр —
Мăнтăр хăнтăрпа
Ватă ăтăра
Вупăр пырĕнчен
Вăтăрса кăлартăмăр!

## Катăркасна тыркас.

*Хăвăрткаламăш.*

Катăркаса пĕр кас
Катăрт-катăрт!
Катăртаттарать тыркас.
Катăркас —
Касăк-кĕсĕк турпас...
Катăртаттаракана
Тытас та лутăркас!

# Мĕн вăл çатма?

Çатма —
Çамкаран çапма!
Кам кăран шӳтлет çапла?
Çатма тени — пушатма!
Тĕпне çап-çут çутатма!





# Чӗрӗп.

Чӗрӗп — чӑн-чӑн йӗп минтерӗ!
Илтрӗр-и, пӗри мӗн терӗ?
«Кайӑр-чӗрӗп-тирӗп», — терӗ,
Пӗр сӑмахсӑр иментерӗ!

Чӗрӗп тирӗ — ҫӗр йӗпрен,
Ҫӗр йӗпрен те чӗр йӗпрен.
Чипер сӑнӗ ҫирӗпрен
Сехре хӑпать чӗрӗпрен!





# Çумăр айĕнче.

Тимĕр шапа
Тарчĕ шкапа,
Тимĕр лаша —
Канаша.
Тăрăша-тăрăша
Уçатăп хăрах куçа:
Чăн-чăнах хăрамастăп!
Эп те Тимĕр,
Улатимĕр —
Çумăрта тутăхмастăп!
Çумăр,
Çăвах пĕр ластăк!

# Кунтах юлтăр Хĕл Мучи.

Шухăш пачĕ пĕр чана:
Чăрăш лартас пахчана!
Капăрлатас лăссине,
Курас уяв уссине.

Куллен килтĕр Хĕл Мучи!
Шав чуптартăр катаччи!
Салакайăк ташшине
Ташлаттартăр кашнине!

Чăваш сăвви каласан
Парнелетĕр круассан.
Ма ун ютра çу каçас —
Чун-чĕри ытла ачаш!

Ыр кăмăллă Мучине
Кĕртес Мăнкун мунчине,
Сĕнес Сĕрен туйине,
Чĕнес Питрав вăйăине!

Хăна тăвас шăрттанпа,
Сăрта тытнă çăрттанпа.
Кунтах юлтăр
ыр мучи!
Хĕпĕртетĕр ачипчи!



Чăрăш лартрăм пахчана!
— Лартмаллаччĕ тахçанах! —
Чăрăш тăрринчи чана
Чанккаса çĕклет чуна.



# Тупмалли.

Хитре витре 3

Кукша кӗр 6

Паттăр вăйĕ — пăтăра 9

Пĕлнĕ пулсан... 11

Вăхăт çук 14

Ывăнакан атă 15

Чĕрене пыман тетте 16

Чурăс пукане 19

Алфавит 21

Мăнтăр хăнтăрпа вату ăтăр
*Хăвăрткаламăш* 23

Катăркаспа тыркас
*Хăвăрткаламăш* 23

Мĕн вăл çатма? 24

Чĕрĕп 25

Çумăр айĕнче 27

Кунтах юлтăр Хĕл Мучи 28

*Литературно-художественное издание*

Для детей младшего школьного возраста

**Карягина Марина Федоровна**

# Паттăр вăйĕ — пăтăра
# В чём же сила батыра?

Стихи, скороговорки

*На чувашском языке*

Художник *П.Н. Сергеев*
Редактор *О.Л. Федорова*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Е.Е. Фомина*
Корректор *О.П. Рубцова*
Компьютерная верстка *Э.В. Кирилловой*

6+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции
согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 06.02.17.
Формат 70×90 1/16. Бумага офсетная. Гарнитура Букварная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 2,34.
Уч.-изд. л. 1,59. Тираж 1000 экз. Заказ № А-474. Изд. № 9.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Мининформполитики Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в типографии филиала АО «ТАТМЕДИА» «ПИК «Идел-Пресс».
420066, г. Казань, ул. Декабристов, 2.

Чăваш
кĕнеке
издательстви

ISBN 978-5-7670-2585-5